## Çурхи çеçке хирте йӑл-йӑл тӑвать...

Çурхи çеçке хирте йӑл-йӑл тӑвать,
Тӑри юрри хир тӑрӑх янрать;
Çеçкесен çийӗнче çил варкӑшать,
Унӑн сасси лӑпкӑ çеç вӑр тӑвать.
Тӑри сасси çӳлте ян-ян каять,
Çил вӗрсессӗн çиле май илтӗнет;
Тӑрин икӗ çуначӗ вӑр-вӑр тӑвать,
Эпӗ çӳлелле пӑхсассӑн курӑнать.
Тӑрин çинçе сасси пит хурлӑхлӑ,
Мӗн сӑвӑпа юрлани илтӗнмест;
Сӑвви пулмасан та вӑл кӑмӑллӑ,
Илтсен чӗрем шухӑшсӑр тусеймест.

*Турхан, Х. Çурхи çеçке хирте йӑл-йӑл тӑвать…: [сӑвӑ] / Х. Турхан // Революцичченхи чӑваш литератури : текстсем / [А. В. Васильев, Г. Ф. Юмарт пухса хатӗрл.] – Шупашкар, 1984 – Т.1 : XX ӗмӗрччен. – 1984. – С. 260-261.*